К84.89(=Чув)
З-88
Ч-37441

Г. Зотова

# Ылтăнту



Национальная библиотека ЧР
4-037441

К 84.89 (=Чув)
ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
БЕСПЛАТНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР
З 88

Г. Зотова

# Ылтăнту

Юмахсем



Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2002

К 84.89 (2 Чув) 6-446

УДК 821. 512. 111 — 93
ББК 84 (2 Рос=Чув) — 4
З 88

*Ӳкерчӗкӗсем* ***Н. Н. Тихоновӑн***

Ч- 37441

ПРОВЕРЕН
20 10 06 ОКТ 2017

НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

**Зотова Г.В.**
З 88 Ылтӑнту: Юмахсем. — Шупашкар: Чӑваш кӗнеке изд-ви, 2002. — 24 с.

Галина Зотова ҫырнӑ хайлавсем ача-пӑча хаҫат-журналӗнче тӑтӑшах пичетленеҫҫӗ, пӗчӗккисем вӗсене килӗштерсе вулаҫҫӗ. «Ылтӑнту» — ҫыравҫӑн пӗрремӗш кӗнеки. Унта кӗҫӗн ҫулхи шкул ачисем валли хайланӑ юмахсене кӗртнӗ. Вӗсем ачасене ырӑ кӑмӑллӑ, сӑпайлӑ, ӗҫчен пулса ӳсме пулӑшаҫҫӗ.

**УДК 821. 512. 111 — 93**
**ББК 84 (2 Рос=Чув) — 4**

**ISBN 5-7670-1231-8**

© Чӑваш кӗнеке издательстви, 2002
© Зотова Г.В., 2002

# Мулкач курăк çиме вĕренчĕ

Тахçан авал мулкач какай кăна çисе пурăннă тет. Вăл кунĕн-çĕрĕн шăши сыхланă, кайăк-кĕшĕке, хур-кăвакала хăваланă. Анчах пурăна киле шăшисем сахалланнă, мулкачĕ те ватăлса пынă — кайăксене тытма йывăрланнă. Çаран çинче пĕртен-пĕр шăши тăрса юлнă, анчах вăл та вăрмана тарса кайнă. Мулкач çав шăшие хăваласа вăрмана çитсе кĕрет. Хальччен вăл вăрманта пулса курман, уйрах пурăннă, çавăнпа хăра-хăра кĕрет вăрмана. Çитсен пăхать мулкач — шăши пĕр çӳллех мар йывăç çине улăхса та кайнă. Вăл кĕске хӳре çине çӳлтен кулса пăхса ларать. «Тытаятăн-и мана, тытаймастăн-и, улăхаятăн-и кунта, улăхаймастăн-и?» — тет ĕнтĕ. Мулкачĕ апла та, капла та тапаçланса пăхать, анчах йывăç çинениепле те хăпараймасть. Кĕçех унăн пуçне ăслă шухăш пырса кĕрет: йывăç тунине кăшласа татса ăна çĕре ӳкермелле. Çапла вăл пĕрре çыртса пăхать, тепре çыртса качăртаттарать — йывăç хуппи ăна килĕшсе каять. Татах кăшлать вăл, кăшлать йывăça.

— Епле тутлă, мĕнле сĕтеклĕ! — тесе киленсе качăртаттарать куян йывăç хуппине. Кăшланăçемĕн унăн хырăмĕ тăрансах пырать, кĕске хӳре



хавасланса каять. Çапла шăши çинчен пачах манать вăл. Меллĕ самантпа усă курса шăшийĕ çавăнтах тарса çухалать.

Шăпах çавăнтанпа килĕштереççĕ те куянсем йывăç-курăка.

## Кашни пулăмăн хăйĕн вăхăчĕ

Пурăннă тет пĕр арçын ача. Вăл йăлăнтарма, нăйкăшма юратнă тет. Çулла çитсен «Хĕлле хăçан çитет?», хĕлле пулсан вара «Çулла хăçан килетши?» тенĕ. Çут çанталăкăн кирек хăш вăхăчĕ те ăна виç кунтанах йăлăхтарнă тет. Çапла вăл уйрăмах Çуллапие тарăхтарса çитернĕ. Кӳреннĕ Çуллапи вара:



— Манăн пур çĕре те йĕркипе çитмелле, пурин патĕнче те пулса савăнтармалла, черетсĕр сан пата килме манăн ирĕк çук. Пĕр сана çеç савăнтарма эсĕ патша мар, — тесе ăнлантарнă ачана.

Анчах ача хăйĕннех пенĕ, ăнлантарнине те итлемен. Вăл кашни кун уя тухса Çуллапие килме чĕнсе кăшкăрнă. Çуллапи çилленсе çитнĕ те ачана кăштах вĕрентсе илме шутланă. Çапла хĕвел анса ларсан ача канлĕ ыйха путрĕ тет, Çуллапи ун вырăнĕ патне йăпшăнса çитсе тăчĕ тет. Вăл ăна ăшăтать, пĕçертет тет,

тар кăларать, çывăрма чăрмантарать тет. Мĕскĕн ача çĕрĕпех йĕркеллĕ çывăраймарĕ тет.

Тепĕр кунне вăл кунĕпех ĕнтĕркесе çӳрерĕ тет: пуçĕ те ыратрĕ, вĕçĕмсĕр çывăрас килчĕ тет. Вара вăл тарăхса мăкăртатрĕ тет:

— Кирлĕ мар мана Çуллапи, Хĕл пултăр часрах! — терĕ тет.

Тепĕр каçхине вара ача кравачĕ патне Хĕлпи васкаса çитнĕ. Вăл ача енне пур енчен те сивĕ янă, аллиурисене шăнтнă, çывăрма паман. Лешĕ темиçе утиялпа витĕнсе выртрĕ тет, анчах ниепле те ăшăнасси пулмарĕ тет. Çапла вăл çывăраймасăрах çĕр каçнă. Тепĕр кунне унăн каллех пуçĕ ыратнă, ача чирлĕ пек курăннă, кунĕпех хавассăр çӳренĕ. Çакна курнă амăшĕ ачине кӳршĕре пурăнакан сиплевçĕ старик патне илсе кайрĕ тет. Старикĕ ачана çапла каланă:

— Эсĕ, ачам, çут çанталăк пулăмĕсене çиллентернĕ. Вĕсен кашнин хăйĕн вăхăчĕ пур. Çулла хыççăн Кĕркунне, унтан Хĕлле, Çуркунне, кайран каллех Çулла килсе çитет. Эсĕ вара хăвна килĕшнĕ вăхăта çеç курасшăн, вĕсен йĕркине пăсасшăн пулнă. Вĕсене кӳрентерме, вăхăтне-йĕркине арпаштарма юрамасть çав, — тенĕ.

Ача вара сиплевçĕрен:





— Мĕн тумалла ĕнтĕ халь? — тесе ыйтнă.

— Çут çанталăк хуçи патне çитсе унран каçару ыйтмалла сан, вара тинех канлĕ ыйхă тупăн, — тенĕ лешĕ.

Çапла тунă та вара кусем: çут çанталăк хуçине шыраса тупса ача йăнăшни çинчен каланă, унран каçару ыйтнă.

Çавăнтан вара ачана чăрмантарма пăрахрĕç тет шăрăх Çуллапипе сивĕ Хĕлпи. Хайхи ача тинех канлĕ çывăрма пуçларĕ тет.

Вăл халĕ нăйкăшма та, йăлăнтарма та пăрахрĕ тет.

## Кампурпа Мăркка

Кампурпа Мăркка питĕ туслă пурăннă. Мăркка кил-çуртра ĕçленĕ: апат-çимĕç хатĕрленĕ, кăмака умĕнче тăрмашнă, пӳрт-çурта тирпейленĕ. Кампурĕ ытларах пахчара, кил хушшинче йĕрке тунă, вут-шанкă хатĕрленĕ.

Çуркунне çитсен вĕсем çапла кайăксем валли йăвасем туса хатĕрлеме шутлаççĕ. Килĕшнĕ — тунă. Кампурĕ шăнкăрч вĕлли тунă, ăна хитре эрешсемпе илемлетнĕ. Йăва хатĕр пулсан вăл кушака:

— Эсĕ, Мăркка, йывăç çине улăхма пултаратăн, хăпарса çак-ха çак вĕллене пӳрт умĕнчи хурăн çине, — тенĕ.

Мăркка килĕшнĕ, йăвана илсе йывăç çине йăпăр-япăр хăпарса кайнă. Хурăн тăррине вăл вăшт кăна улăхса çитнĕ. Анчах васканипе хăй те асăрхайман, шăнкăрч вĕлли унăн чĕрнисем хушшинчен шуса тухса аялалла ӳке панă. Кампурĕ çак самантра аялтан пăхса тăнă пулнă. Шăнкăрч вĕлли çӳлтен ӳксен шăпах йыттăн пуçĕ çине лекнĕ, ăна питĕ хытă ыраттарнă. Çавăн хыççăн мĕскĕн Кампур икĕ эрне вырăнпах выртнă.



Кампур сывалса çитсен Мăрккапа иккĕшĕ вĕсем пĕррехинче вăрмана каяççĕ тет. Йытти кушакне хăйĕнчен уйрăлма хушмасть тет, анчах Мăркка шăшисене хăваласа тата лĕпĕшсем хыççăн чупса часах çухалса каять тет.

Кампурĕ вара киле пĕчченех таврăнать. Тепĕр эрнерен тин çĕтсе çӳресе ывăннă Мăркка киле çитет. Пӳртне кĕрсен пăхать — унта пур çĕрте те йĕркесĕрлĕх: кашăк-тирĕке çуман, урайĕ таса мар, йытă хăй çывăрнă вырăнне те пуçтарман...

Тарăхсах каять Мăркка, çилленмеллипех çилленет Кампура.

Çакăнтан пуçланса каять те Кампурпа Мăркка хушшинчи хирĕçӳ.

Шăпах çавăнтанпа килĕштермеççĕ те ĕнтĕ пĕр-пĕрне йытăсемпе кушаксем.

## Капăр канфет

Пĕр лавккара çăкăр, пĕремĕк тата канфет тĕл пулчĕç тет.

— Эпĕ куринчен те чиперри, — мухтанать канфет. — Пăхăр-ха ман çине, епле хитре ман кĕпе, йăлтăр-ялтăр çиçсе çеç тăрать. Эпĕ тата куринчен те тутли! — тет.

— Эпĕ те тутлă, — сăмах хушмасăр чăтаймасть тет çăкăр. — Мана тин çеç кăмакаран пĕçерсе кăларнă.

— Эпĕ те тутлă, — тет пĕремĕк те.

— Эпĕ пур пĕр кунта чи тутли, чи чиперри те чи хакли!.. — хăйĕннех перет канфет.

Çапла чылай тавлашаççĕ вĕсем, вĕçне-хĕрне тухаймаççĕ.

Ирхине лавккана пĕр кинемей килсе çăкăр туянчĕ тет.

— Куртăн-и, — тĕксе илчĕ тет çăкăр пылак çимĕçе, — эпĕ куринчен те тутлăрах пултăм, çавăнпа илчĕ те мана кинемей, — терĕ тет.

Кăшт тăрсан лавккана хĕр ача кĕчĕ тет те:





— Мана кукамай пĕремĕк илсе килме хушрĕ, — тесе пĕр хутаç пĕремĕк туянса кайрĕ тет.

— Эпĕ те санран тутлă пултăм, — тесе кӳрентерсе хăварчĕ тет пĕремĕк канфета.



Канфет вара:

— Нимĕн те ăнланаймастăп, эпĕ кунта чи чиперри, чи пылакки те чи тутли. Çитменнине тата, чи хакли, çапах мана туянакан çук, — тесе тĕлĕнет тет.

Выртать-выртать тет çапла канфет лавккара, хăйне хаклăран çынсем туянма пултарайманнине ниепле те ăнланаймасть тет.

# *Чике старике ултталани*

Пĕр карчăкпа старик пурăннă. Вĕсен Урине ятлă хĕр пулнă. Хĕр ача питĕ чипер — кăн-кăвак куçлă, сап-сарă çӳçлĕ, илемлĕ çавракка питлĕ пулнă. Вăл кунĕпе çепĕç чĕлхипе чĕвĕлтетсе карчăкпа старике савăнтарнă. Ашшĕ-амăшĕ хĕрне питĕ юратнă, унăн кăмăлне тултарма тăрăшнă, вăл мĕн ыйтнă çавна илсе панă. Ун çинче ялан илемлĕ çи-пуç пулнă.

Анчах Урине ĕç ĕçлеме пĕртте юратман тет. Ăна ачашласа çеç усранă тет, пĕр ĕçе те хăнăхтарман тет. Çапла вăл юлхав хĕр пулса çитĕннĕ.



Вĕсен ялĕ çумĕнче пысăк вăрман сарăлса выртнă. Унта тĕрлĕ чĕр чун, кайăк-кĕшĕк йышлă пулнă. Кунтах вăрман хуçи — Чике старик пурăннă. Вăл йĕркелĕхе-типтерлĕхе юратнă, кашни ир вăрман тăрăх чĕр чунсем мĕнле пурăннине тĕрĕслесе çӳренĕ. Вĕсене вăрманти йĕркене пăхăнса пурăнма вĕрентнĕ.

Пĕррехинче çапла карчăкпа старикĕн хĕрĕ Урине пĕчченех вăрмана тухса кайнă. Нумай та çӳремен хĕр ача, çухалса кайнă. Утсан-утсан вăл Чике старик çурчĕ патне çитсе тухнă. Хĕр ача асăрханса пӳрте кĕнĕ, унта никам та пулман. Чике старик вăл вăхăтра шăпах чĕр чунсем патне хăнана кайнă пулнă. Урине унăн-кунăн пăхкалать, кăшт ларсанах ывăннăскер çывăрса каять.

Кĕçех хай Чике старик киле таврăнать. Пӳрте кĕрсен вăл хĕр ачана курать те савăнсах каять: «Тинех мана пулăшакан тупăнчĕ», — тет. Вăл хĕр ача ĕçе юратманнине пĕлмен ĕнтĕ.

Чике старик ирсерен вăрмана тухса кайнă, кун каçипех чĕр чунсем патĕнче пулнă. Хĕр ача килте юлнă, старик пӳртне çăрапах питĕрсе хăварнă.

Урине çапла пĕр кун пурăннă старик патĕнче, икĕ кун. Пӳртре

вăл ахалех ларнă, нимĕн те ĕçлемен. Апат çинĕ те çывăрнă, çинĕ те çывăрнă. Чике старик каçхине килне ывăнса таврăнсан хĕр ача нимĕн те туманнине курать тет, анчах шарламасть тет.

Пĕррехинче Урине пÿртре пĕччен тунсăхласа куççуль юхтарса ларнă чух урай шăтăкĕнчен пĕр пĕчĕк çеç шăши тухать тет. Вăл хĕр ачана çапла калать тет:

— Чике старик ĕçченсене çеç юратать. Вăл килнĕ çĕре эсĕ пÿрт-çурта тасатса тирпейле. Вăл тата тутлă çиме юратать, тĕрлĕ шÿт-кулă итлеме кăмăллать, — тет.



Уринен питĕ киле каясси килет, старик кăмăлне епле çавăрмаллаши тет. Халĕ шăши çапла каланă хыççăн вăл васкасах ĕçе пикенет: шăпăр илсе пÿрт урайне çап-çут пуличчен шăлса каять. Шăши ун ĕçне сăнаса ларнă, тиркешсе илнĕ. Хĕр ача вара урайне тепĕр хут шăлса кайнă. Анчах шăши унăн ĕçне каллех тиркенĕ. Хĕр ача вĕри куççуль тăкса йĕрсе янă, куççулĕ çур витре пухăннă. Çавăнпа урайне çусан урай тинех тасалса йăлтăр çуталса кайнă. Вара хĕр ачан кăмăлĕ те лайăхланнă, вăл Чике старик валли тутлă апат пĕçересси çинчен шутлама тытăннă. Мĕн пĕçерес тесе чылай шутласан вăл пĕррехинче

амăшĕпе пĕрле тутлă хуран кукли пĕçернине аса илнĕ. Шăпах çавна пĕçерме хатĕрленнĕ те вăл халь.



Шăши çури ăна Чике старик апат-çимĕçе ăçта усранине кăтартнă. Унта Урине кăштах çăнăх, тăпăрч тупнă. Пĕр пĕчĕк кайăк тата ăна темиçе çăмарта илсе килсе панă. Старик пӳртĕнче сак айĕнчен хăма хушшипе ӳссе тухнă симĕс сухан тупăннă. Кĕçех тата мулкач çури çу тупса килнĕ. Халĕ апат хатĕрлеме юр-вар çителĕклех пухăннă. Хĕр ача питĕ тăрăшса хуран кукли пĕçерет. Апата чи малтан чĕкеç чĕппи астивсе пăхать, питĕ тутлă тесе мухтать. Хĕр ачан кăмăлĕ çĕкленсех каять.

Акă каç пулать, Чике старик вăрмантан ывăнса таврăнать. Вăл ялтăраса тăракан тап-таса урайне курсан тĕлĕнсе каять. Кĕçех ăна Урине апата чĕнет, питĕ тутлă хуран кукли лартса парать. Тĕлĕнсе те савăнса кайнă старик хĕр ачана мухта-мухта кукăль çиме тытăнать.

Урине халь мучие мĕнле тĕлĕнтерсе култарасси çинчен шутлать. Унăн старик кăмăлне çавăрса часрах киле каймалла-çке. Хĕр ача хăй асĕнче пĕр юмах ăсласа хатĕрлет. Чике старик апат çисе тăрансан тытăнать ăна хăй хайланă юмаха каласа парса тĕлĕнтерме. Старикĕн кулса вăйĕ те пĕтсе çитет. Унтан

хĕр ача юрă хыççăн юрă шăрантарма пуçлать — савăнăçлине, хурлăхлине; хытă янраттарса, вăраххăнрах, шăппăнрах юрлать вăл. Çапла итлесе ларнă самантрах Чике старик хăй те сисмесĕр çывăрса каять. Вара Урине алăка шăппăн уçрĕ те тухса тарчĕ тет. Чике старик сиссе те юлаймарĕ тет.



Килне килсен Урине йăлтах улшăнчĕ тет. Вăл килти ĕçсене хăех тăва пуçларĕ тет. Ашшĕ-амăшĕ питĕ савăнаççĕ тет. Хĕр ачана вара чĕнессе те Урине тесе мар, Иринушка та Ирина тесе çеç чĕнеççĕ тет.

## Çынран ан кул

Пĕр карчăкпа старик пурăннă тет. Вĕсен Мĕтри ятлă пĕртен-пĕр ывăл пулнă тет. Çак Мĕтри питĕ ачашланма юратнă тет. Вăл ӳссе пынăçемĕн тата усалланса, куштанланса пырать тет. Хăйне пысăка хурать, çынран кулма та именмест тет. Пĕррехинче Мĕтри урама тухать те инçе мар кӳлĕре илемлĕ акăша курать. Акăшĕ аманнăскер пулнă та пĕр-пĕчченех çӳренĕ. Кайăкăн пĕр ури ыратнă, çавăнпа вăл хăрах уран сиккелесе çӳренĕ.



Акăша курсан Мĕтри унта чупса

пынă, кайăка шуйхантарма, чулпа пеме тытăннă. Аманнă кайăк инçе каяйман, ача ăна татах хăвалама, кăшкăрашма пикеннĕ.



Хăранă, сехĕрленсе ӳкнĕ акăш пур вăйне пухса кӳлĕ варринелле ишсе кайнă. Вăл унта та лăпкăн ларайман, хăрушлăх каллех килессерен пуçне ун-кун пăркаласа тавраналла тинкернĕ.

Çакăн хыççăн темиçе кун иртсен Мĕтри чирлесе ӳкнĕ. Унăн мĕн пур шăм-шакĕ вĕриленсе кайнă, пуçĕ хытă ыратнă. Тата урисем те темшĕн чăтма çук ыратнă, хăрах ури çине çех пусма май килнĕ. Çапла Мĕтри темиçе кун нушаланса выртнă, чирĕ ниепле те иртсе кайман. Ашшĕпе амăшĕ хăраса ӳкнĕ, вĕсем ачана сиплевçĕ карчăк патне илсе каяс тенĕ. Сиплевçи вĕсен хуйхине тӳрех ăнланнă, часах чирĕн сăлтавне те пĕлтернĕ:

— Сирĕн ывăлăр, — тенĕ вăл, — кӳлĕри акăша кӳрентернĕ, ăна питĕ хытă хăратнă. Мĕтрин çав акăша шыраса тупса каçару ыйтмалла. Акăш пурăнакан кӳлĕри шывпа пĕрĕхсен ачан ури те тӳрленĕ.

Ватăсем урхамах кӳлнĕ те ывăлне лартса акăша шырама тухса кайнă. Акăшĕ кунти кӳлле пăраххса кайнă иккен, Мĕтри хытах хăратнă-тăр ăна.

Пыраççӗ акӑ вӗсем çулпа. Хирӗç пӗр пӗчӗк кайӑк вӗççе килет, хӑй чӗлхипе чивлетсе:

— Мӗтри мана хӗлле пӗрчӗ сапса парсан эпӗ акӑш ӑçтине калатӑп сире, — тет.

— Сапса парӑп, яланах пулӑшӑп, — сӑмах парать ача.



Вӗсем вара кайӑк кӑтартнӑ çулпа кайса акӑша шыраса тупаççӗ, унран каçару ыйтаççӗ те Мӗтрие чиртен сыватма тархаслаççӗ.

Акӑшӗ вӗсене:

— Сирӗн пахчара хитре кӗлчечек тӗмӗ пур. Çав кӗлчечекӗн чи пысӑк чечеккин йӗппине илсе килсе ман урари хурта чиксе туртса кӑлармалла. Вара эпӗ сывалатӑп, Мӗтрие те пулӑшма шантаратӑп, — тет.



Çапла калать те акӑш кӳлӗри шывпа арçын ачан урине пӗрӗхет. Мӗтри ури çав самантрах тӳрленет, ача чипер утакан пулать. Вара вӑл часрах киле вӗçтерсе кайса кӗлчечекӗн пысӑк йӗппине тупса килет, акӑш урине тӳрлетет.

Çавӑнтанпа акӑш карчӑкпа старикӗн кӳллинче пурӑнма тытӑнать, нимӗнрен те хӑрамасть. Унтах вӑл мӑшӑр та тупать тет.

Мӗтри те ӗнтӗ хӑйне йӗркеллӗ тытать тет, ыттисенчен кулма та пӑрахнӑ, сӑпайлӑ калаçать тет.

# Хӗл Мучие сыватрӗҫ

Ҫӗнӗ ҫул уявӗ ҫывхарать. Пур ҫӗрте те капӑр ёлкӑсем лараҫҫӗ, асамлӑ ҫутӑпа йӑлкӑшса уява килме йыхӑраҫҫӗ. Илемлӗ кӗвӗ янӑрать, чӑрӑш ҫинчи ҫутӑ ҫӑлтӑрсем пӗр-пӗринпе куҫ хӗсмелле выляҫҫӗ.



Хӗл Мучи кучченеҫлӗ хутаҫне хатӗрлесе хунӑ ӗнтӗ, ҫил ҫунатлӑ урхамахӗсене кӳлсе тӑратнӑ. Анчах шӑпах ҫула тухас умӗн йывӑр хутаҫне ҫӗкленӗ чух сывлӑшӗ пӳлӗннипе вӑл кукленсе анать. Утма тӑрать — утаймасть, ури ҫине те пусаймасть. Мучи вара майӗпен шуса хӑй вырӑнӗ ҫине ҫитсе выртать, тӑнне ҫухатать. Урхамахӗсем ӗнтӗ тахҫанах хуҫине кӗтеҫҫӗ, ҫула тухма вӑхӑт ҫитнине пӗлтереҫҫӗ. Анчах Хӗл Мучи тухмасть те тухмасть. Ҫакна кура урхамахсем пӗтӗм вӑрмана ян янратса кӗҫенсе яраҫҫӗ:

— Хӗл Мучи! Ҫула тухма вӑхӑт!

Урхамахсем кӑштах кӗтнӗ хыҫҫӑн каллех кӗҫенеҫҫӗ, хуҫине чӗнеҫҫӗ. Хӗл Мучи ҫаплах курӑнмасть, сассине те памасть. Лаша кӗҫенӗвне илтсе пӗр пӗчӗк ҫил ачи вӗҫсе килет, Хӗл Мучи патне кӗрет. Вӑл вырӑн ҫинче чирлӗ выртнине курсан ҫил ачи часрах каялла тухать, пӗтӗм вӑрман илтмелле сасӑпа йӗрсе ярать:

— Хĕл Мучи чирленĕ, ăна пулăшма васкăр!

Кайăк сассипе вăрманти мĕн пур чĕр чун вăранать, Мучие пулăшма васкать. Чи малтан упа утаман хăй шăтăкĕнчен йăраланса тухать, пĕр пичке пыл йăтса пырать. Вăл Хĕл Мучие пылпа чей ĕçтерет. Кашкăрсем аш-какай, пăлансем витрепе сĕт, пакшасем мăйăр та çырлакăмпа, тилĕсем чăх илсе пыраççĕ. Кашниех хăйĕн çимĕçĕпе Хĕл Мучие сăйласшăн, чиртен сыватасшăн хыпкаланаççĕ. Ака ăна сĕт вĕретсе ĕçтерчĕç, мунча хутрĕç те старикĕн шăм-шакне милĕкпе çапса сиплерĕç, ăшă çу сĕрчĕç. Хĕл Мучин йывăр хутаçне те кăштах çăмăллатас терĕç — унти канфет-пĕремĕке илсе вăрманти пĕчĕк чĕр чунсене хăналарĕç.

Нумай пулчĕ-и, сахал-и, Хĕл Мучи ура çине тăчĕ, хăйне сыватнăшăн тусĕсене тав турĕ. Ака ĕнтĕ вăл урхамахĕсем çине ларчĕ те инçе çула тухса вĕçтерчĕ.

Тусăмсем, кĕтĕр пурте Хĕл Мучие! Вăл Çĕнĕ çул уявĕ ячĕпе саламлама пурин патне те çитет, унăн пысăк хутаçĕнче кашнин валлиех тутлă кучченеç пур!




4-37441
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

# Сурална куна уявлани

Мумукăн çуралнă кунĕ çывхарса килнĕ. Вăл тусĕсене уявра техĕмлĕ чейпе хăналас, тутлă икерчĕ çитерес, асамлă юмахсем итлеттерес терĕ. Менелник сĕтелĕ тулăх пултăр тесе мучи пахчари чи тутлă çимĕçсене татса кĕчĕ.





Уяв ыран тенĕ чух Мумук уй варринче ларакан кăмака патне васкарĕ, хăнасене сăйлама тутлă икерчĕ пĕçерсе пама ыйтрĕ.

— Пĕçерсе парăттăм та, çăнăх çук, — хуравларĕ ăна кăмака.

Мумукăн ял пуçĕнче ларакан армана кайма тиврĕ вара.

— Ёçчен арман тус, — йăлăнчĕ вăл, — икерчĕ пĕçерме çăнăх пар-ха.

— Çăнăхне парăттăм та, тырри çук, — тет арманĕ хаш сывласа.

Мумук хресчен патне утрĕ.

— Хаклă çĕр ĕçченĕ! Икерчĕ пĕçерме тырă параймăн-ши? — терĕ.

— Тыррине парăттăм та, кĕлете уçма çăраççи çук, — тет хресченĕ. — Ăна шăши йатса тарнă, — тет.

— Кушак тус, çав шăшие тытса унран çăра уççине туртса илсем, — Пĕçукран пулăшу ыйтрĕ Мумук.

Кушакĕ кĕлет айне кĕрсе шăширен çăра уççине туртса илчĕ. Вара хресчен çăрана уçрĕ, кĕлетрен тырă илсе армана леçрĕ. Арманĕ вăштăр çил пулăшнипе часах çăнăх авăртса пачĕ, кăмака тутлă икерчĕ пĕçерчĕ.

Кĕçех Мумука саламлама тусĕсем пухăнчĕç. Çав уявра эпĕ те пултăм, тутлă апат-çимĕçе астиврĕм. Кашнинех пилĕкшер икерчĕ çитерчĕç, пыллă чей ĕçтерчĕç, юрă-ташăпа савăнтарчĕç. Хăнисем — пыл хурчĕсемпе лĕпĕшсем, кайăксемпе вĕсен чĕпписем. Карусельпе те ярăнтăмăр — ăна упа утаман çавăрттарчĕ. Хур кайăксем хăнасене пĕлĕтре хăйсен çуначĕсем çинче, акăшсем кӳлĕре ярăнтарчĕç. Питĕ хаваслă иртрĕ уяв.



Уяв шавне илтсе çитмĕл те çичĕ тинĕс леш енчи йывăç çинчи тăмана та вăраннă тет те:

— Мĕн пулчĕ-ши ку? — тесе халичченех тĕлĕнсе ларать тет.

## Илтăнту

Пурăннă тет пĕр патшалăхра карчăкпа старик. Вĕсем туслă, питĕ килĕштерсе пурăннă тет, анчах вĕсен ача çук тет. Çавăнпа вĕсем тунсăхлаççĕ тет. Ватăсем юмăç патне те кайса пăхрĕç, чиркӳре çурта та лартрĕç тет, анчах ниепле те ачаллă пулаймарĕç тет. Вĕсен пахчинче çӳллĕ те яштака хыр ӳснĕ. Пĕр çулхине унта çăхан йăва çавăрчĕ тет. Йĕри-тавра шурă юр кĕрчĕсем купаланса тăраççĕ тет, çăхан сивĕрен хăрамасăр чĕпĕ кăларчĕ тет. Чĕппи тухсанах çăхан савăннипе пĕтĕм тĕнче илтмелле





кăшкăрса ячĕ тет. Ăна илтсен карчăк стариккине ятлаçма тытăнчĕ тет:

— Çăхан ырра сиссе кăшкăрмасть, кас çак хыра! — тесе калать тет.

Старикĕ пăчкăпа пуртă илчĕ тет те хыр патне пырса касма хатĕрленчĕ тет. Вăл пурттине çĕкленĕ çеç, ун патне çăхан вĕçсе аннă та этем чĕлхипе калаçма пуçланă:

— Ан кас хыра, ман чĕппĕн пурнăçне ан тат. Уншăн эпĕ сан виçĕ ĕмĕтне пурнăçлама шантаратăп, — тенĕ.

Старик тĕлĕнсе кайрĕ, пурттине аяккалла ывăтрĕ тет. Вара çăхана:

— Пирĕн пӳртре ача-пăча сасси çук, ачаллă пулсан эпир телейлĕ пулнă пулăттăмăр, — терĕ тет.

— Эпĕ сире пулăшăп. Акă сана çавра çăмха, вăл ăçталла кусать, эсĕ те çавăнталла ут, — терĕ тет çăханĕ.

Хай старик пӳрте кĕрсе карчăкĕпе сывпуллашрĕ те ача шырама тухса кайрĕ тет. Вăл пĕр кун утать, тата тепĕр кун, виççĕмĕшĕнче пĕр çӳллĕ ту патне пырса тухать. Ту тăрринче хайхи çăхан ларать тет. Старик, ывăннăскер, канма ларчĕ те хутаçĕнчен кукăль кăларса çиме тытăнчĕ тет. Çав самантра вăл çăхан этем чĕлхипе: «Мана та çитер!.. Кар-р!!! Манăн та çиес килет!» — тенине илтет. Вара старик çăхана

кукăль татăкĕ пăрахса парать тет. Çăхан татах: «Татах пар-р! Кар-р! Тăрантар-р!!!» — тесе кăшкăрать тет. Старик çапла çăхана виçĕ хутчен кукăль пăрахса пачĕ тет, хăйне çиме кăшт çеç хăварчĕ тет.

Çăхан кукăле çисе ярсан старике тав тăвать те çуначĕсемпе ваш-ваш сулать тет. Старик куçĕ умĕнчех ту икĕ пая пайланать. Çăхан тĕлĕнсе тăракан старике ту ăшне кĕме çуначĕпе сулса паллă парать тет. Старик хăра-хăрах шалалла кĕрет. Кăштах утсан тĕлĕнтермĕш курать: ун умĕнче хитре кăна ача кӳми çуталса ларать, кӳмере ылтăн çӳçлĕ арçын ача выртать. Тĕлĕнсе те савăнса кайнăскер, старик ачана алла илет. Унтан васкаса ту ăшĕнчен тухать, килнелле уттарать тет.



Çитет хай старик килне. Эх, савăнаççĕ те вĕсем ача тупăннишĕн. Карчăкпа старик ачан ятне те тупрĕç тет: Ту ывăлĕ — Ылтăнту. Чунтан савса, юратса ӳстереççĕ ватăсем хăйсен пепкине. Ачи те кунпа мар, сехетпе ӳссе пынă. Кĕçех вăл яштак пӳллĕ маттур йĕкĕт пулса тăнă, ашшĕ-амăшĕ ун çине ытарайми пăхса савăннă.

Ку вăхăталла çак çĕршыври патшан та хитре хĕр ӳссе çитнĕ тет. Ашшĕ юратнă хĕрне тĕнчери чи чаплă йĕкĕте качча парасшăн тет.

Анчах ун пек каччăна мĕнле тупмалла-ха? Çавăн çинчен шутласа пуç ватаççĕ тет патша тарçисем. Таврари йĕкĕтсенчен кашниех хитре хĕре качча илесшĕн тет. Патша хăйĕн хĕрне кӳлĕ варринчи кермене кайса ячĕ тет. Хĕре качча илес текенĕн виçĕ ĕç пурнăçламалла пулнă: чи малтанах кăкшăмран чей ĕçсе пăхмалла, унтан кӳлĕ урлă ишсе каçмалла, юлашкинчен вара хĕре кӳлĕ урлă пĕр йĕпетмесĕр илсе каçармалла.



Такам та тăрăшса пăхнă, анчах пĕри те хĕре илме тивĕçлĕ пулайман тет. Кăкшăмри чее ĕçсе пăхнă каччăн чĕлхи хăйне итлеми пулать, пуçĕнчи мĕн пур шухăшне пĕлтерет тет. Акă пĕри чей ĕçет те: «Патша хĕрне каччă илсен пуйса каятăп», — тет. Теприĕçсен унăн чĕлхи хăй кахалли çинчен пĕлтерет, виççĕмĕшĕ — çынран кулма юратни çинчен. Патша ку йĕкĕтсене хăваласа çеç ярать, нумайăшĕ çапла ахалех тухса утать.

Карчăкпа старикĕн ывăлĕ Ылтăнту та патша хăйĕн хĕрне валли каччă шырани çинчен илтет. Ĕçчен, сăпайлă, ырă чунлă, сăнран-кĕлеткерен пăхсан та юратмалла каччă пулнă Ылтăнту. Çак хыпара илтсен вăл хăйĕн телейне тĕрĕслесе пăхма шутлать, ашшĕ-амăшĕпе сывпуллашса çула тухать.

Пĕр кун иртет, икĕ кун, виççĕ-

мĕш кунне Ылтăнту патша керменĕ умне çитсе тăрать. Кунта самаях пысăк черет пухăннă. Кашнинех чей ĕçтереççĕ, каччăсен шухăшĕсене пĕлеççĕ. Акă Ылтăнту чей ĕçет, хăйĕн мĕн пур ырă шухăшĕсене пĕлтерет, çут кӳлĕ урлă ишсе каçать — мĕн пур ырă енĕсене кăтартать. Халĕ унăн хĕре пĕр йĕпетмесĕр кӳлĕ урлă илсе каçмалла. Анчах епле каçарас? Каччă кĕçех сăхан çинчен аса илет, ăна хăй патне чĕнет. Сăханĕ пулăшма килĕшет тет. Вăл хĕр патне вĕçсе çитет те ăна хăй çунаттисем çине лартать, кӳлĕ урлă вĕçсе каçать тет.

Патша хĕрĕ ылтăн çӳçлĕ каччăна пĕрре курнипех юратса пăрахать. Каччи те ăна килĕштерет. Хĕрпе каччă пĕрлешеççĕ, телейлĕ пурăнма пуçлаççĕ тет.

Карчăкпа старикĕн пахчинче ӳсекен хыр çинчи сăхан йăви халĕ те хăй вырăнĕнчех тет. Хыра касса ярасран патша ятарласа хушу кăларчĕ тет. Сăхан халь те çак патшалăхрах пурăнать тет. Кам та кам çĕршыва тапăнас тет, çавăн çинчен маларах пĕлсе вăл патшана каласа парать, патша çарĕ тăшмана хирĕç вăхăтра тухать тет.

Патша çарне çĕнтерме çуккине кура тăшмансем урăх тапăнма та пăрахрĕç тет.





# Тупмалли


Мулкач  курăк çиме вĕренчĕ ........ 3
Кашни пулăмăн хăйĕн вăхăчĕ ........ 4
Кампурпа Мăркка ........ 6
Капăр канфет ........ 8
Чике старике улталани ........ 9
Çынран ан кул ........ 13
Хĕл Мучие сыватрĕç ........ 16
Çуралнă куна уявлани ........ 18
Ылтăнту ........ 19

17=82



Литературно-художественное издание
*Для детей младшего школьного возраста*

**Галина Вячеславовна Зотова**

**ЫЛТĂНТУ**
**ЗЛАТОГОР**

*Сказки*

На чувашском языке

Редактор *А. К. Шашкина.* Художник *Н. Н. Тихонова.* Художественный редактор *А. В. Семенова.* Технический редактор *Л. К. Егорова.* Корректор *З. И. Гаврилова.* Компьютерная верстка *М. В. Филипповой.* Изд. лиц. № 06317 от 26.11.01. Подписано к печати 16.09.02. Формат 84х108$^1/_{16}$. Бумага офсетная. Гарнитура Школьная. Печать офсетная. Усл. печ. л. 2,52. Учетно-изд. л. 1,27. Тираж 2000 экз. Заказ № К-3391. Изд. № 20.

РГУП «Чувашское книжное издательство», 428000, Чебоксары, пр. Ленина, 12 б.
Отпечатано в РГУП «ИПК «Чувашия», 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.